ХЫПАР
Чӑваш ачисен хаҫачӗ
# Тантӑш
6+
48 (4514) №, 2016, декабрь (раштав), 8
1931 ҫулхи январӗн (кӑрлачӑн) 12-мӗшӗнче тухма тытӑннӑ
Хакӗ ирӗклӗ
Индексӗ: 54802

ХАСТАРСЕМ

## Юмах тӗнчи ӑҫтан пуҫланать?



**Ҫӗнӗ ҫул ҫывхарса пынӑ май шкулсем юмаха ҫаврӑннине сӑнама мӗн тери кӑмӑллӑ. Кирек епле пӗлӳ ҫуртне кӗрсен те юр пӗрчисен ҫепӗҫ ташшипе тата йӑлтӑр-ялтӑр ҫумӑр тумламӗсемпе киленме, Хӗл Мучипе тата Юр пикепе сӑн ӳкерӗнме пулать... Чылайӑшӗ вара шухӑш вӗҫевне ирӗке ярса Ҫӗнӗ ҫул юмахӗсенчи тӗрлӗрен сӑнар ӑсталама та хал ҫитерет. Ачасен тата вӗрентекенсен пултарулӑхӗнчен тӗлӗнсе пӗтерме ҫук.**

Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Хӗрлӗ Чутайри Ача-пӑча пултарулӑх ҫуртне ҫитсен ҫакнашкал тӗлӗнтермӗш теттесене мӗнле ӑсталанине курма та тӳр килчӗ. Хушма пӗлӳ паракан учреждение вӗренекенсем тулли кӑмӑлпа ҫӳреҫҫӗ. Пӗр-пӗр япала ӑсталанӑ чухне хӑйсене асамлӑхпа ҫыхӑннӑнах туяҫҫӗ-ҫке вӗсем: хут, кӑранташ, хачӑ тата тӗрлӗ тӗслӗ сӑрӑ пултӑр кӑна – илемлӗ тетте хатӗр те. Пултарулӑх ертӳҫисем вара ҫак ансат япаласем ҫумне вӑрттӑн капӑрлӑхсем хушма та вӗрентеҫҫӗ.

Ача-пӑча пултарулӑх ҫурчӗн директорӗ Валентина Матвеевна Коракова хӑй те ача чунӗллӗ. Ҫавӑнпах шӑпӑрлансене пултарулӑх енӗсене уҫма пулӑшасси – уншӑн тӗп вырӑнта.

Ку учреждени ултӑ направленипе ӗҫлет: илемлӗх, туризмпа спорт, физкультурӑпа спорт, социаллӑ педагогика, техника, ҫут ҫанталӑк ӑслӑлӑхӗ. Пурӗ – 19 кружок. Ытларах техника направленийӗ ачасене илӗртет. Чӑн та, паянхи пурнӑҫра ку питӗ кирлӗ. Туризмпа таврапӗлӳ кружокӗсем те аталанса пыраҫҫӗ.

Кунта пултарулӑхне туптакансем республика тата Пӗтӗм Раҫҫей ӑмӑртӑвӗсенче тӑтӑшах палӑраҫҫӗ. Сӑмахран, кӑҫал ҫӗршыври ачасемпе педагогсен «Талантсен ҫӑлтӑрлӑхӗ» пултарулӑх конкурсӗнче «Илемлӗх проекчӗ хатӗрлесси» пӗрлешӳ /ертӳҫи – Галина Петровна Артемьева педагог/ пӗрремӗш вырӑн ҫӗнсе илнӗ. Ҫакнашкал ҫитӗнӳсем татах та нумай.

Ӑста алӑллӑ, пуян шухӑш вӗҫевӗллӗ пулни ҫыннӑн пурнӑҫне илемлетет, хаваслатать, кӑсӑклатать. Юмах тӗнчи те шӑпах ҫавӑн пек маттурккасенчен пуҫланать. Хӑйсем мӗн пӗлнине ҫитӗнекен ӑрӑва та вӗрентнӗшӗн пултаруллӑ педагогсене пысӑк тав!

***Лариса ПЕТРОВА.***

**СӐНӲКЕРЧӖКРЕ:** Ҫапларах илемлӗ юр пӗрчисем ӑсталарӑмӑр паян.

ҪЫРӐНТАРУ – 2017

«ХЫПАРПА» унӑн кӑларӑмӗсене раштав уйӑхӗн

ПОЧТА УЙРӐМӖСЕНЧЕ:
«ХЫПАР» – 522 тенкӗ те 78 пус, «ХЫПАР-эрнекун» – 255 тенкӗ те 90 пус,
«ТАНТӐШ» – 207 тенкӗ те 96 пус, «ТЕТТЕ» – 126 тенкӗ те 42 пус, «САМАНТ» – 160 тенкӗ те 68 пус

«СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» КИОСКӖСЕНЧЕ:
«ХЫПАР» – 348 тенкӗ, «ХЫПАР-эрнекун» – 186 тенкӗ,
«ТАНТӐШ» – 168 тенкӗ, «ТЕТТЕ» – 132 тенкӗ, «САМАНТ» – 192 тенкӗ

РЕДАКЦИРЕ (альтернативлӑ майпа):
«ХЫПАР» – 144 тенкӗ, «ХЫПАР-эрнекун» – 90 тенкӗ,
«ТАНТӐШ» – 90 тенкӗ, «ТЕТТЕ» – 90 тенкӗ, «САМАНТ» – 120 тенкӗ

10-мӗшӗччен ЙӲНӖ ХАКПА ҫырӑнтараҫҫӗ



# Халăхсем нумай, Чăваш Ен пĕрре çеç!



«Эпир туслăхпа вăйлă» мероприятисен ярăмĕпе çыхăнтарса республикăри ачасемпе çамрăксен библиотекин таврапĕлӳпе наци литературин пайĕнче Татьяна Владимировна Юстуспа тĕлпулу иртрĕ. Татьяна Владимировна – Чăваш Енри «Мордва халăхĕн культура центрĕ» организаци ĕçченĕ. Тĕлпулăва Шупашкарти экономикăпа технологи колледжĕн студенчĕсем хутшăнчĕç.

«Мордва» этнонимпа икĕ субэтноса /ирçе тата мăкшă/ пайланакан финн-угр халăхне палăртаççĕ. Татьяна Владимировна ирçесемпе мăкшăсен йышĕ çулсеренех чакса пынине пĕлтерчĕ. Чăваш Енре вĕсем ытларах Улатăр, Йĕпреç тата Шăмăршă районĕсенче пурăнаççĕ иккен.

Студентсем ятарлă фильм курса мордва халăхĕн йăли-йĕркипе, культурипе, наци кухнипе, паллă çыннисемпе паллашрĕç. Ирçесемпе мăкшăсем мĕн авалтан тыр-пул ĕçĕпе аппаланнă, вĕлле хурчĕ тытнă, сунара çӳренĕ. Халăх сăмахлăхĕнчи сăнарсем те хăйне евĕрлĕ: Вирява – вăрман хуçи, Ведява – шыв хуçи, Паксява – уй-хир хуçи /мăкшăсен/, Норовава – уй-хир хуçи /ирçесен/, Пургинепаз – тӳпе е аслати ыр-усалĕ /ирçесен/, Атям – аслати /мăкшăсен/, Варма – çил.

Туй йăли-йĕрки питĕ интереслĕ. Сăмахран, «лемдема» – çураçнă хĕре урăх ят парас йăла-йĕрке. Çак ятпа ăна кайран кĕçĕн ачисем те, тăванĕсем те чĕннĕ. Аслă тăванĕсем вара ăна çак кунтанпа «рьвяня» тесе е упăшкин ячĕ çумне «рьвяня» сăмах хушса чĕннĕ. Христиан тĕнне йышăннă хыççăн ачасене вырăсла çеç мар, вăл мĕнле вăхăтра е ăçта çуралнине кура мордвалла та ят панă. Уй-хирте кун çути курнă пулсан пепкене Паксяль /пакся – уй-хир/, тырă вырнă вăхăтра вара – Нуяль /нумс – вырма/ тесе чĕннĕ.

16-мĕш ĕмĕр варринче нимĕç дипломачĕ тата çулçӳревçи С.Герберштейн мордва халăхĕ çинчен çапла çырнă: «Вĕсем – питĕ вăйлă çынсем. Пурте тенĕ пекех пехота салтакĕсем, ухăран пеме ăста». «Çынран ан хăра, ăна кӳрентересрен хăра», – ăс парать мордва ваттисен сăмахĕ. Сăмах май, хăйсене кӳрентернĕшĕн çак халăх çыннисем пĕр шелсĕр, пурте пĕр пулса хаяррăн тавăрнă. Пĕр-пĕриншĕн кар тăрасси питĕ вăйлă аталаннă вĕсен.

Ĕçченлĕхĕпе тĕрĕслĕхшĕн мордвасене таврара питĕ хисепленĕ.

Тĕлпулăва хутшăнакансем мордва тупмалли юмахĕсене хаваспах тавçăрчĕç, мăкшăсемпе ирçесем çинчен калакан кĕнекесемпе паллашрĕç. Ытти халăхсемпе кăсăклансан, вĕсене хисеплесен тăван халăха та ытларах юратма тытăнатпăр.

***Татьяна ЗАХАРОВА.***

# «Вут-кăвар мĕншĕн питĕ шелсĕр?»

Кунашкал экскурсире çак таранччен пĕрре те пулманскерсем музей залне кĕрсенех питĕ тĕлĕнчĕç. Мĕн кăна çук кунта! Темĕнле машина, урапа çине вырнаçтарнă шыв пички, тĕрлĕ пакур… Çутă хĕрлĕ сăрăпа сăрланă пушар машини кăна такама та хăй патне илĕртнĕн курăнса ларать. Ачасем республикăри пушар хуралĕн музей залне кĕнĕ-кĕменех Владимир Леонтьев экскурсовода нумай-нумай ыйту пама та ĕлкĕрчĕç.

– Мĕншĕн пушар тухнине сиссенех «01» телефонпа шăнкăравламалла? – ыйтрĕ ушкăнри ачасенчен пĕри.

– Çунакан пӳлĕм чӳречине мĕншĕн уçма юрамасть тата? – интересленчĕ тепри.

– «Шăрпăк – вăйă мар» текен каларăша мĕнле ăнланмалла-ши?...

Тата нумай çĕннине пĕлме тăрăшрĕç хĕрачасемпе арçын ачасем.

Пушар хуралĕн музей ĕçченĕ вара кашнин кăмăлне тивĕçтерме васкарĕ. Ачасем кăсăкланса итлени ăна савăнтарчĕ паллах. Апла пулсан вĕсем пĕчĕклех вут-кăварпа тимлĕ пулни, унпа асăрханни инкек патне çитерместех.

Ача садĕнчи «Почемучки» 11-мĕш хатĕрленӳ ушкăнĕ нумаях пулмасть музейра пулса курчĕ. Курса тĕлĕнчĕç çеç мар, ятарлă специалиста ыйтусем те пачĕç. Владимир Леонтьев центр ĕçченĕ кĕçĕннисене пушар вăхăтĕнче пӳлĕмре пытанса ларма юраманнине, вут-хĕм алхасакан çуртран тăхтаса тăмасăр васкаса тухма тăрăшмаллине асăрхаттарса каларĕ. Ачасем пушарнăйсен йывăр та яваплă ĕçĕ çинчен нумай пĕлме пултарчĕç. Çунакан çурт макечĕпе, юсавсăр электропралуксем инкек патне илсе çитерекен тĕслĕхсемпе те паллашрĕç. Кашни мĕн те пулин пĕлме тăрăшрĕ.

Пушарнăйсен тумĕсене алăпа тытса, хăшĕсене тăхăнса та пăхрĕç пĕчĕкскерсем.

Экскурси паянхи çĕнĕ техника хатĕрĕсемпе паллашнипе вĕçленчĕ.

– Эпир малашне вут-кăварпа асăрханулла пулма сăмах паратпăр. Вут-кăварпа выляни ырри патне илсе çитерменнине тусăмсене те пĕлтерĕпĕр, – терĕç ачасем.

***Татьяна СЕРГЕЕВА,***
***воспитатель.***

Шупашкар, 178-мĕш ача сачĕ.



*° Çĕнĕ пьесăпа паллашнă самант*

# Пулĕ ăнăçлă спектакль!

Ялти культура çуртне ачасем хаваспа çӳреççĕ. Кунта Вера Федоровна Кузнецова вĕсене Пукане театрне кĕтет-çке! Хальхинче Ĕç çыннин çулталăкне халалласа «Эпир ялтах юлатпăр» пьеса лартма палăртнă. Çапла, пуканесене кăна чĕрĕлĕх кĕртмеççĕ кунта çӳрекен маттурккасем, хăйсем те тăрăшсах тĕрлĕрен сăнар калăплаççĕ. «Эпир ялтах юлатпăр» пьесăпа конкурса хутшăнма Шупашкара каяссине пĕлсен вара пушшех те хавхаланчĕç. Вера Тинюкова Верук, Алена Силюкова Тоня, Оля Толстова Сухви, Даниил Хитров зоотехник, Юлиан Чиркин Жора, Николай Таютов Иван Семенович сăнарне выляма калаçса татăлчĕç.

– Вылянă чухне сăнара чунпа туймалла, – вĕрентрĕ вĕсене Вера Федоровна.

Пултаруллă ертӳçĕ хăйĕн ĕçне чунĕпех парăннă. Çавăнпах ачасем унăн кашни сăмахне тăнлаççĕ, ăна юратаççĕ. Кунсеренех уроксем хыççăн Пукане театрĕн кружокне васкаççĕ. Тăрăшулăхĕ вара çитĕнӳсенче курăнать. Çак театр республика фестивалĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă.

– Юлиан Чиркин питĕ лайăх вылять, – мухтать 7-мĕш класс ачине Вера Федоровна. – Фестивальте пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕ вăл. Вера Тинюкова вара – 3-мĕш.

Тĕрлĕ конкурс-фестивальте çĕнсе илнĕ Хисеп хучĕ те, Тав çырăвĕ те чылай паллах. Спектакльсене хатĕрленмелли пӳлĕмре йĕри-тавра вырнаçтарнă декорацисем те тӳрех куçа илĕртеççĕ. Юмах тĕнчи тейĕн кунта! Ачасем ăшша туртăннине пурте пĕлеççĕ. Эппин, Вера Федоровнăна кунта çавăн пек ăшăлăх тытса тăнăшăн ырламалла.

Халĕ хатĕрлекен спектакль те çитĕнӳ илсе килĕха. Ăна ахальтен суйламан-çке.

– Паянхи кун ялта юлакан, фермăра ĕçлеме килĕшекен çамрăк сахал. Ку пьесăра ачасем амăшĕсене пулăшас тесе ялтах юлаççĕ. Акă ĕнтĕ çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх, – ăнлантарчĕ Вера Федоровна.

***Лариса ПЕТРОВА.***

Патăрьел районĕ,
Сăкăт ялĕ.

Тантăш
*чăваш ачисен хаçачĕ*

● **УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● **ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:**
**54802** – (çур çула) – Чăваш Республикинче

● **Редакципе издатель адресĕ:**
**428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.**

● **"Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.**

● **"ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:**
Тел.: 64-24-01

● **ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ**

● **ТЕЛЕФОНСЕМ**

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 28-83-70 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● **РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ**

● **НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА**

● **КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА**

● **ЭЛЕКТРОН АДРЕС:**
e-mail: tantas@list.ru

● **ТИРАЖ
1178 экз.**

● **ЗАКАЗ
№ 4349**
Пичете раштав уйăхĕн 7-мĕшĕнче алă пуснă.

● **ПИРĔН САЙТ:**
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Телейне ĕçре тупнă

Кăçал Ĕç çыннин çулталăкĕ пулнă май хамăн асатте пирки те ыррине палăртса калас килет. Асатте, Николай Петрович Евдокимов – Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ механизаторĕ, асанне Нина Даниловна мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен Ильич ячĕллĕ хуçалăхра вăй хунă, «Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

Асатте хĕрĕх пилĕк çул колхозра тăрăшса нумай çĕннине шыранă. Хуçалăх экономикине тĕреклетес тесе ăнăçлă ĕçленишĕн унăн сăнÿкерчĕкне районти Хисеп хăми çине те вырнаçтарнă пулнă.

Юратнă асатте Чăваш Тимеш салинче 1992 çулта кун çути курнă. Ачаллах вăл ашшĕн тĕрекне, ăшшине туяйман. Чи çывăх çынни вăрçăран таврăнайман. Çемье йывăрлăхĕ пĕтĕмпех амăшĕ çине тиеннĕ. Пурпĕрех вăл икĕ хĕрĕпе пĕр ывăлне тĕрĕслĕхпе, тÿрĕлĕхпе пурăнма вĕрентнĕ.

Вун пилĕк-вун тăватă çулти çамрăк акапуçпа суха тунă, сухапуçпа çĕрулми лартнă. Йĕпреçе тырă леçме те çÿренĕ. Темĕнле йывăр пулсан та ял ĕçченĕ пусăрăнса ÿкмен, малашлăха курса кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшнă.

Асатте пĕтĕм пурнăçне, ĕçне-хĕлне тăван тăрăхпа çыхăнтарнă. Асанне каласа панине эпĕ çаплах астуса юлнă: асатте пĕтĕм ĕçе тĕплĕ тунă, ыттисене те çаплах вĕрентнĕ, хăнăхтарнă. Ваттисемпе ватă пек, çамрăккисемпе çамрăк пулма, вĕсемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлнĕ.

Сăмах вакламах юратман манăн асатте. Анчах кăмăлĕ çаврăнса кайсан чунĕ яланах уçăлса çунатланнă. Пире, юратнă мăнукĕсене, чĕрçи çине лартатчĕ те хăйĕн пурнăç историне каласа пама юрататчĕ.

Асатте ялти тулли мар вăтам шкултан вĕренсе тухсан Йĕпреçри тракористсен курсне кĕнĕ. Çамрăк каччă техникăна хăвăрт алла илнĕ. Тăрăшуллăскере трактор шанса панă та вăл унпа çара кайиччен уй-хирте суха тунă, тырă акнă.

Салтакран таврăннă яш качча Йĕпреçри МТСра каллех трактор шанса панă. Ун чухне вăл районти кашни колхозра пулса курнă. Вăрçă хыççăнхи вăхăтра вĕсем ура çине тăрес тесе тăрăшнă. Нумай тăрăшма тивнĕ. Çамрăксем яла юлни савăнтарнă ун чухне. Пысăк йышпа хуçалăхра темĕн те тума пулать-çке!

Çитмĕлмĕш çулсенче асатте кăткăс техникăна тарăнрах алла илес тесе Канашри механизаторсем вĕрентсе кăларакан училищĕре пĕлĕвне ÿстерет. Каярах юсав мастерскойне ертсе пырать. Тивĕçлĕ канăва тухсан та вăл тăван хуçалăха аталантарас ĕçре вăй хунă. Ял халăхĕ тата ферма выльăхĕсем валли тырă авăртнă. «Ĕçне кура – хисепĕ» теççĕ. Асаттене те нумай пысăк та сумлă наградăсемпе чысланă. Шăпах вĕсем асатте мĕнпур ĕçе асанне вĕрентнĕ пек тÿрĕлĕхпе пурнăçланине, юратнă профессие чун-чĕререн парăннине, унра савăнăç тупнине палăртаççĕ.

Çитĕнÿсем ахаль килмеççĕ. Çывăх çыннипе – асаннепе – килĕштерсе пурăнни те, йывăр вăхăтра лава пĕрле туртни те, ача-пăча туслăхĕ те – пурте вĕсем ăна пысăк пулăшу, хавхалану панă. Асаттепе асанне çичĕ ачана кун çути парнелесе тивĕçлĕ пĕлÿ панă, пурнăç çулне тĕрĕс суйласа илме пулăшнă. Вĕсен хушшинче тĕрлĕ профессипе ĕçлекенсем пур, çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнаççĕ. Асатте пекех кашни хăйĕн савăнăçне те, телейне те ĕçре тупнă.

Паян асатте пирĕнпе юнашар çук ĕнтĕ. Çулсем иртнĕçемĕн унăн пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ тата мал ĕмĕтлĕхĕ манра тата уççăнрах курăнса пырать. Унăн сăнÿкерчĕкĕ çине пăхатăп та çакăн пек çирĕплетÿ патне пыратăп: «Манăн та сан пекех хастар, пултарулла, хисеплĕ пуласчĕ. Эсĕ вара мана пур енĕпе те пулăшасса шанатăп».

***Данил ЕВДОКИМОВ,***
***8-мĕш класс вĕренекенĕ.***

Йĕпреç районĕ,
Чăваш Тимеш вăтам шкулĕ.

• "РАБОЧИ ПРОФЕССИЙĔ ЯЛАН ХИСЕПРЕ" КОНКУРСА

# «Мĕншĕн ĕне чĕнмест?»

Висĕ çула пуснă Лариса хăйĕн юратнă кукамăшĕнчен ниепле те уйрăлаймасть – иккĕшĕ ялан пĕрле. Линук кинеми вара пĕчĕк хĕр пĕрчишĕн чунне пама хатĕр.

Хальхинче те алла витре илнĕ кукамăшĕ витене ĕне сума васкать. Яланхиллех Улапуç кĕтет кил хуçине ăшă витере. Линук кинеми выльăха юратса Улапуç ят панă.

– Лариса, хĕрĕм, ăшă тумланар та ĕне сума тухар. Пушмаку авă çавăнта, – аллипе сĕлтрĕ кукамăшĕ. – Кайрăмăр вара.

Ирхи шăплăхра ăшă витери чăр! чăр! сасă хăлхасене хуплать. Лариса, пĕчĕкскер, кукамăшĕпе юнашар вырнаçнă та витрене тулса пыракан тата витере сарăлнă кăпăклă сĕт шăршипе киленсе калаçать.

– Кукамай, сĕтне Улапуçа кам парать? Сĕчĕ ăçтан килет? – ыйтуллăн пăхать Линук кукамăшĕ çине. – Мĕншĕн ĕне чĕнмест?

Аслă тусĕ пĕтĕмпех ăнлантарчĕ мăнукне. Кĕçех иккĕшĕ сĕтел хушшине вырнаçрĕç, кăпăклă та сиплĕ сĕте юратса ĕçрĕç.

# Санпа мухтанатăп, аттеçĕм!

Тракторист, механизатор сăмахсем иккĕшĕ те пĕрешкел пĕлтерĕшлех. Хамăр ял çынни, манăн кÿршĕ Володя пичче шăпах çак юратнă профессипе тăрăшать. Хут çине те Володков тесе алă пусать. Ашшĕ çапла хушаматлă пулнă унăн. Йăх-несĕл чысне упрать иккен Володя пичче.

– Эпĕ тĕрĕссипе тракторист. Чухлатăн-и? Механизатор сăмах вăл анлă та пысăк пĕлтерĕшлĕ, – терĕ вăл.

Çемье пысăк Володя пиччен. Пĕрремĕш класа çÿрекен Машăна вăл час-часах тĕрлĕ хыпарпа пуянлатать.

– Тракторист мĕн тума кирлине эсĕ, Маша, ăнланатăн пуль тетĕп? – ăшшăн пăхрĕ вăл хĕр пĕрчи çине. – Тракторист тăрантарать, тырăлă, ашлă-пăшлă тăвать.

– Питĕ тĕрĕс, атте, – савăнса йăлт та ялт сиксе илет пĕчĕкскер. – Атте, эсĕ – тракторист. Апла пулсан пире пăхатăн, ял, хула çыннисене тăрантаратăн! Мĕн тери кирлĕ иккен сан професси! Чи мухтавлисенчен пĕри вăл. Эпĕ санпа та, ĕçÿпе те мухтанатăп, аттеçĕм! Ытти професси çыннисене те питĕ-питĕ саватăп. Вĕсем питех те кирлĕ ĕç тăваççĕ.

***Арина ЕФИМОВА.***

Шупашкар,
1-мĕш пуçламăш шкул.
**Вĕрентекенĕ Светлана Георгиевна ЕФИМОВА.**

# Йĕппе çип илет те тĕрри пит хитре пулать...



**САНÿКЕРЧĔКРЕ:** Егор Мешков çăматă йăвалать.
Елчĕк районĕ, Аслă Елчĕк.

Егор Мешков Аслă Елчĕк ялĕнче пурăнать. Вăл хăйĕн сывлăхне кура мар, нумай тĕрлĕ ĕç тума ăста. Ÿкерме те пултарать, ытти вак-тĕвеке те ним мар тăвать. Любовь Германовна Адюкова вĕрентекен кăтартса, хавхалантарса пынипе вара тинтерех кăçатă йăвалама та хăнăхса çитрĕ. Алла çăм илет те нимĕн те мар çийĕнчех кÿлепине хатĕрлет, унтан çăма йăваласа çывратать. Çапла майпа кăçат форми те пулать. Ĕç пĕтĕмпех йĕркеллĕ те тирпейлĕ, кал-кал пынине кура арçын ача пушшех те савăнать.

Пĕтĕм ĕçе туса пĕтерни хыççăн Егор кăçатта илемлетме те хăнăхнă – вăл алла тĕрлĕ тĕслĕ çип илсе илемлĕ тĕрĕсемпе капăрлатать. Мĕн тери хитре пулать пĕчĕк çеç парне! Туссене савăнтармалли чи паха япала! Маттур, Егор!


# ĂШĂ САЛАМСЕМ

*СМС-саламсене пĕлтермелли номер:*
**89051975911**

Элĕк районĕнчи Пĕчĕк Кăканар ялĕнче пурăнакан ырă кăмăллă, ĕçчен çыннăмăр **Ефросиния Афанасьевна СЫСОЕВА** çитес кунсенче 80 çул тултарать. Мăшăрĕпе 4 ывăл çуратса ÿстернĕ. Çемйипех колхозра ырми-канми ĕçленĕ. Юбиляра чĕререн саламлатпăр. Хурçă пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, кашни утăмрах ăнăçу, телей, юрату сунатпăр.

***Ял-йыш.***

Элĕк районĕ.

✦ ✦ ✦

Элĕк районĕнчи Юманлăх ялĕнче пурăнакан, Херемкасси шкулĕнче вĕрентекенре ĕçленĕ маттур **Вера Владимировна АЛЕКСАНДРОВА** 70 çулхи юбилейне паллă тăвать. Ăна чун-чĕререн саламлатпăр. Кунсерен телей, ăнăçу, çирĕп сывлăх сунатпăр.

***Пĕрле ĕçленĕ вĕрентекенсем.***


# Вĕççĕр юмах

Пуриннă тет Кушакпа Йытă. Вĕсем пĕр-пĕрне юратман. Пĕррехинче кушак сунартан таврăннă. Йытă ун çине тапăннă, çыртса илнĕ.

Пырать кушак макăрса. Ăна хирĕç çынсем килеççĕ.
– Кушак, Кушак, мĕншĕн йĕретĕн?
– Мĕнле йĕрес мар? Мана Йытă çыртса илчĕ.
– Йытă, Йытă, мĕншĕн Кушака çыртса илтĕн?
– Мана Кашкăр кÿрентерчĕ.
– Кашкăр, Кашкăр, мĕншĕн Йытта кÿрентертĕн?
– Мана Мулкач тыттармарĕ.
– Мулкач, Мулкач, мĕншĕн Кашкăра тыттармарăн?
– Манăн пурăнас килет, – терĕ тет Мулкач.

***Софья КОЗЛОВА, 4-мĕш класс.***

Комсомольски районĕ, Шурут шкулĕ.

# Пĕр ялтан – пĕччен

Çапла, ялсем пушанса пыраççĕ. Кам ăçта пурăнать ĕнтĕ. Пĕрисем хулана тухса каяççĕ те тăванĕсем патĕнче е урăх çын хваттерĕнче пур-çук укçине тăкакласа кун кунлаççĕ. Теприсем ялтах ĕç тупма тăрăшаççĕ. Ял пушанать. Çулла урамсем кăшт та пулин ача-пăча шавĕпе, калаçăвĕкуллипе тулкалаççĕ-ха. Хуларан мăнукĕсем аслашшĕ-асламăшĕ патне васкаççĕ. Хĕлле вара? Чун хурланать. Ял пушаннишĕн, вăл ватăлса пынишĕн.

Вăта Пукашра пурăнакан Ларисăпа Константин Пырковсен ывăлĕ паян ялта пĕр-пĕччен Хуракасси вăтам шкулне пĕрремĕш класа çÿрет. «Мĕнле-ха капла?» – тесе те тĕлĕнмелле пек. Нимĕн те тăваймăн. Пĕччен васкать арçын ача шкула, шкултан – киле.

1970-мĕш çулсенче ялти хупăннă пуçламăш шкула «Пионер сасси» /«Тантăш»/ хаçат пулăшнипе çĕнĕрен ĕçлеттерме те тытăннăччĕ. Уншăн халăх питех те савăнчĕ хăй вăхăтĕнче. Хаçата тем пекех тав турĕç. Анчах çĕнĕрен уçăлнă шкул темиçе çул каялла хупăнчĕ. Юрать шкула Лександр пиччесем салатса пĕтерме памарĕç, çуртне упраса хăварчĕç. Ачасем çуккипе пулчĕ те ĕнтĕ çак пăтăрмах.

Ял çеç ан çухалтăрччĕ. Вăл аталанасса шанса пурăнатпăр. Ĕçчен çынсем пурăнаççĕ кунта. Апла пулсан шанăç пурах.

***Анатолий АНИШОВ.***

Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Вăта Пукаш.

**•ВИКТОРИНА ПĔТĔМЛЕТĔВĔ**

# Чăваш халăхĕн чи юратнă пики



**Эпир пурте юратса вулакан «Салампи», «Алтăр çăлтăр», «Шурă çўçлĕ хĕр», «Симĕс ылтăн» повеçсемпе «Хунавлах хăрнисем», «Тăвăл умĕн» романсем тата нумай хайлав çырнă Чăваш халăх писателĕ Александр Артемьев çуралнăранпа кăçал 92 çул çитрĕ.**

«Салампи» повесть тăрăх Чăваш наци конгресĕн вĕренўпе ăслăлăх комитечĕ, «Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕсен секцийĕ тата «Самант» журнал «Чăваш халăхĕн чи юратнă пики» викторина ирттерчĕç.

Конкурса хутшăнакансем «Салампие» тĕплĕн вулани, ăмăртура маттур пулни савăнтарчĕ. «Салампи» повеçе килĕштерекенсем пирĕн республикăра чăнах та пуррине пĕлтĕмĕр. Кун пирки чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ Валентина Ефимова /Куславкка районĕ, Куславкка 3-мĕш шкулĕ/ çапла çырать: «Салампие» тепĕр хут вуласа тухрăм. Пĕрремĕш хут повеçпе паллашни аса килчĕ. Александр Артемьевăн чĕлхе пуянлăхĕнчен тĕлĕнтĕм. Ăмăртăва чăнласах чи чаплă, кăтартуллă хайлав тăрăх пĕлсе йĕркеленĕ. Конкурс пирĕн несĕпсипете туптама пулăшрĕ».

Повеçе юратса вулакан кĕçĕн классен учителĕ Татьяна Архипова /Çĕнĕ Шупашкар, 3-мĕш шкул/ Салампи çинчен хăйĕн шухăшне уçăмлă палăртса калать. «Чăваш хĕрĕ Салампи пирĕншĕн чи юратнă пике пулса тăчĕ», – тет вăл. Евгения Сорокина /Элĕк районĕ, Вутлан ача сачĕ, воспитатель/: «Тавтапуç сире «Салампи» повеçе çĕнĕрен аса илме пулăшнăшăн. Питĕ интереслĕ пулчĕ».

Викторинăна 60 ытла çын хутшăнчĕ. Вĕренекенсем: Татьяна Еремеева, Ангелина Бабанова /Канаш районĕ, Сиккасси шкулĕ/, Анастасия Осипова /Красноармейски районĕ, Трак шкулĕ/, Анна Долгова /И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ/, Мария Софронова /Патăрьел районĕ, Туçа шкулĕ/, Анастасия Бельдекова /Патăрьел районĕ, Тури Туçа шкулĕ/, Алиса Митрофанова /Шупашкар, 40-мĕш шкул/, Валентина Бельская /Канаш районĕ, Сиккасси шкулĕ/, Екатерина Васильева /Патăрьел районĕ, Нăрваш Шăхаль шкулĕ/, Дария Иванова, Кристина Катыкова /Патăрьел районĕ, Пăлапуç Пашьел шкулĕ/, Елена Яшина, /Елчĕк районĕ, Çирĕклĕ Шăхаль шкулĕ/, Юлия Кулакова /И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ/, Людмила Вениаминова /Етĕрне районĕ, Мăн Чураш шкулĕ/ пулчĕç.

Вĕрентекенсем: Т.А. Архипова, Л.Н. Леонтьева /Çĕнĕ Шупашкар, 3-мĕш шкул/, В.А. Фомина /Шупашкар, 29-мĕш шкул/, Л.А. Алексеева /Шупашкар, 5-мĕш гимнази/, Ю.Е. Анисимова, Л.В. Анисимова, А.В. Егорова, М.И. Архипова /Шупашкар, 10-мĕш шкул/, Р.А. Гаврилова, Н.М. Николаева, А.В. Митрофанова, Е.О. Шленская /Шупашкар, 40-мĕш шкул/, Е.А. Майков /Шупашкар районĕ, Кăшавăш шкулĕ/, А.В. Ишова /Шупашкар районĕ, Тутаркасси шкулĕ/, Г.Т. Такин /Комсомольски районĕ, Комсомольски 1-мĕш шкулĕ/, С.В. Тяхмусова /Шупашкар, 43-мĕш шкул/, Л.Н. Клементьева, Е.М. Михайлова /Йĕпреç районĕ, Пучинке шкулĕ/, З.П. Михайлова /Красноармейски районĕ, Красноармейски шкулĕ/, Г.Г. Ямангеева /Муркаш районĕ, Шомик шкулĕ/, Л.В. Ишмуратова /Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул/, Ю.Е. Кузьмина /Красноармейски районĕ, Трак шкулĕ/, О.В. Маркова /Вăрнар районĕ, Кĕçĕн Кипек шкулĕ/, Т.В. Иванова, Е.Д. Данилова /Шупашкар, 49-мĕш шкул/, Н.В. Петрова, З.В. Хромова /Çĕнĕ Шупашкар, кадетсен лицейĕ/, К.Н. Михайлова /Шупашкар, 2-мĕш лицей/, В.Н. Воронова /Елчĕк районĕ, Курнавăш шкулĕ/, В.П. Ефимова, Г.А. Педюсева /Куславкка районĕ, Куславккари 3-мĕш шкул/, С.П. Кулакова /Патăрьел районĕ, Ыхраçырми шкулĕ/, Л.В. Мироновна /Вăрнар районĕ, Туçи Мăрат шкулĕ/, Н.И. Павлова /Патăрьел районĕ, Нăрваш Шăхаль шкулĕ/, Е.В. Анюрова /Патăрьел районĕ, Сăкăт шкулĕ/, Г.Л. Никифоров /Çĕрпў районĕ, Çĕрпўри аграрипе технологи техникумĕ/, С.Н. Ефимова /Çĕнĕ Шупашкар, 17-мĕш шкул/, А.А. Такина /Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей/, Г.Ф. Хлебникова /Патăрьел районĕ, Патăрьелĕн 2-мĕш шкулĕ/, Е.А. Сорокина /Элĕк районĕ, Вутлан ача сачĕ, воспитатель/, Л.А. Кузнецова /Канаш районĕ, Аслă Мами шкулĕ/, А.В. Трофимова, И.Г. Никифорова /Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул/, И.В. Власова, А.Г. Петрова /Шупашкар, 47-мĕш шкул/, Л.В. Осипова, В.А. Самарина /Патăрьел районĕ, Турхан шкулĕ/, Н.К. Черлакова /Етĕрне районĕ, Мăн Чураш шкулĕ/ хастар хутшăнчĕç.

Викторина ыйтăвĕсене пурте туллин хуравланă. Çапах та хăшĕ-пĕри «Салампи» повеçĕн малтанхи ятне тĕрĕс палăртманни пулчĕ.

Александр Артемьев тĕп герой ятне кура хайлава малтан «Илемпи» ят панă пулнă. Повеçĕн тĕп сăнарне Салампи ят парасси Петĕр Хусанкайпа çыхăннă. 1950-мĕш çулхи раштав уйăхĕсенче чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай Тури Вылăра Артемьев патĕнче хăнара пулнă. Хусанкайăн малтанхи арăмĕпе çуратнă хĕрĕ Салампи ятлă пулнă. Автор повеçе «Салампи» ят парса 1956 çулта уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларнă.

Александр Артемьев чăн пурнăçри хăй лайăх пĕлекен çынсен сăн-сăпатне, характерне «Салампи» повеçри персонажсен сăнарне калăпланă чухне тĕпе хунă. Паллах, вăл тăван ялĕнчи çынсен, тантăшĕсен сăнарĕсемпе те усă курнă. Вулакансенчен чылайăшĕ «Салампири» сăнарсен пурнăçри прототипĕсене тĕрлĕрен палăртнă.

Тĕрĕссипе, хуравсем çапларах. Салампи прототипĕ – Тури Вылăри Нина Ивановна Ермакова учительницăн сăнарĕ. Вăл Александр Артемьевăн пĕрремĕш юратăвĕ пулнă, анчах вĕсем пĕрле пулайман. Нина Ивановна Александр Спиридоновича юратнипех качча каймасăр ĕмĕрне ирттернĕ теççĕ.

Салампи сăнарне, характерне тума автор хăйĕн пĕрремĕш арăмĕн, чипер сăнлă Октябринăн тата иккĕмĕш арăмĕн, хулăн çивĕтлĕ, ырă кăмăллă Валентинăн сăнарĕсене илнĕ. Салампи амăшĕ, Валери амăшĕ – Александр Артемьев амăшĕ. Анатолий Алмазов – Александр Артемьев хăй, Анисим Асламас композитор та. Саланов хушаматлисем Тури Вылă ялĕнче темиçе те. Чушков, профессор, самăрри – Сергей Павлович Юшков, педагогика наукисен кандидачĕ, çыравçă. Ласкин, лутри – Геннадий Плаксин çыравçă. Борисов – Борис Иванович Борисов, Тури Вылă ялĕнче Александр Артемьевпа кўршĕре пурăннă. Борис Иванович çамрăк чухне Шупашкарта И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ.

«Салампи» повеç шухăш-туйăма çĕклекен йĕркесемпе малтанах пуçланать: «Купăс сасси илтĕнсен кĕрхи каç та илемлĕ. Таçтан, тури касри йăмрасем айĕнчен, юрă вĕçсе килчĕ те, анат касри улаха чун кĕчĕ, тунсăхланă хĕрсен чĕрисем хаваслăн тапма тытăнчĕç.

– Ах! – терĕç икĕ хĕр харăсах. Иккĕшĕ те пĕр хушă сывлама чарăнса купăс сассине тăнларĕç». Кĕрхи каçра тунсăхлă янăракан купăс сасси çамрăксен чун-чĕри хусканăвĕпе пĕрлешсе кĕвĕленет те вулакана темле çутă туйăмпа çупăрласа илет. Çак туйăм ăна повеçе мĕн вуласа пĕтеричченех çупăрласа тăрать. Çакнашкал чĕрĕ ўкерчĕксемпе сăнлăхсем, символла пĕлтерĕшлĕ пайрăмсем хайлавра тăтăшах тĕл пулаççĕ. Паллах, вĕсене ўкерчĕклеме музыка чунлă Артемьев кăна пултарнă.

Повеçре пулса иртекен ĕçсем кăткăс та çивĕч. Автор пурнăçа тĕрлĕ енлĕн, ўкерчĕклĕн сăнарлать, геройсен тулаш тата ăшри хирĕçĕвĕсене ăста та хивре кăтартать. Çаксене пула ĕнтĕ Валерий Яковлев режиссер «Салампи» повеçе никĕсе хывса пьеса çырнă, кĕвĕ-çемĕ сассиллĕ хайлав Анисим Асламаса вара «Салампи» опера çырма хавхалантарнă.

Литература критикĕсем Александр Артемьев пултарулăхне тĕрлĕ енлĕн хакланă. Вĕсенчен пĕри Ипполит Иванов «Салампи» повесть автор ятне çўле çĕклерĕ, тăван литературăна çĕнĕ те вăйлă талант килни çинчен пĕлтерчĕ», – тенĕ.

Тĕнче литературинче чăнласах классика шайĕнчи «Салампи» повеçе юратса вулакан хаклă туссем! Сире çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, «Чăваш халăхĕн чи юратнă пики» ăмăртура маттур пулнăшăн тав тăватпăр, вăййа хастар хутшăннăн тата ыйтусене хуравланăшăн пурне те Хисеп хучĕпе чыслатпăр.

2017 çулта та «Самант» журналпа тата «Тантăш» хаçатпа туслă пулма, вĕсем йĕркелекен ăс-хакăлпа пултарулăх ăмăртăвĕсене хастар та пуçаруллă хутшăнма кăмăл, чăтăмлăх, ăнăçу тата çирĕп сывлăх сунатпăр.

Хисеп хутне **Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, Пичет çурчĕ, 13-мĕш çурт, 6-мĕш хут адреспа «Тантăш» хаçатпа «Самант» журнал редакцийĕсене кĕрсе илме пултаратăр.** Хăвăрпа пĕрле «Тантăш» хаçатпа «Самант» журнала çырăннине ĕнентерекен квитанцие илме ан манăр!

***Геронтий НИКИФОРОВ,***
***ЧР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ.***



## *Хĕл Мучи патне çыру çырар-и?*

Шупашкарта «Хĕл Мучи патне янă çыру» пултарулăх конкурсĕ пырать. 7-16 çулсенчи ачасем Çĕнĕ çулăн хуçи патне çыру çырмалла. Унта вĕсем вĕренўри çитĕнĕвĕсемпе, çулталăкра тунă ырă ĕçĕсемпе паллаштармалла.

Тупăшу икĕ номинаципе иртмелле. Конкурсăн «Литература произведенийĕ» номинацине хутшăнакансен сăвă-калав, юмахпа эссе çырса комиссие тăратмалла. «Çĕнĕ çул открытки» номинацире хăйĕн пултарулăхне кăтартас текенсен вара 200х300 миллиметрлă хут çине çуллă е йăлтăркка флуоресцентлă сăрăсемпе илемлетнĕ ўкерчĕксене хаклава сĕнмелле. Унта нимĕнле текст та пулмалла мар.

Сирĕн ĕçĕрсене **«Шупашкар хули, Тĕп почтамт, Хĕл Мучи валли» адреспа йышăнаççĕ. Унсăр пуçне çырăвăрсене раштавăн 20-мĕшĕччен хулари В.В.Маяковский ячĕллĕ тĕп библиотекăна** та илсе килме пултаратăр. Конкурса хутшăнас кăмăллисен хулан официаллă сайтĕнчи заявкăна çырса тултармалла.

Икĕ номинацире те çĕнтернисене **раштавăн 24-мĕшĕнче** Хĕрлĕ тўпемре хаклă парнесемпе чыслĕç.

# Кашни ĕçре чун ăшши сисĕнет



Раштав – чи савăнăçлă та кĕтнĕ уявсенчен пĕри. Христос çуралнине тĕрлĕ çĕршывра хаваслă кăмăл-туйăмпа кĕтсе илеççĕ, паллă тăваççĕ.

Христос çут тĕнчене килнĕ хыпара кĕтÿçĕсем чи пĕрремĕш илтнĕ. Хайхискерсем тин çеç çуралнă ачана пуç тайма каяççĕ, вĕсене Вифлеем çăлтăрĕ çул кăтартса панă. Çавăнтанпа çак çутă та чи таса уявра пĕр-пĕрне парне парас йăла пур. Чăрăша теттепе илемлетеççĕ, гирлянда çутаççĕ. Кашни кил-çуртра ăшăлăх палăрать, чăрăш, тĕрлĕ апат-çимĕç шăрши сарăлать. Пурте Раштава кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.



Шупашкарти кооператив институтĕнче вара чÿк уйăхĕнчех уяв çывхарса килни сисĕнме тытăннă. Шупашкар-Чăваш епархийĕпе пĕрле йĕркеленĕ «Тепло РУК» конкурс вĕçленчĕ. «Чи илемлĕ Раштав открытки» тата «Чи хитре Раштав ал ĕçĕ» номинацисене хутшăнса республикăран пурĕ 1943 ĕç килчĕ. Аппликацисем, вĕтĕ шăрçаран хатĕрленĕ ĕçсем, пластилинран тата ытти хатĕртен тунă япаласем чăннипех те илĕртÿллĕ.






Комисси пур автор ĕçне те тĕплĕн тишкерсе хак пачĕ. Открыткăсемпе ал ĕçĕсен куравĕ Шупашкарти кооператив институтĕнче декабрĕн 16-мĕшĕнче иртет.

**СĂНÜКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** ачасен ал ĕçĕсем.

# Ман пĕрремĕш, ман юратнă вĕрентекенĕм

Чăваш Республикин Вĕренÿ институтĕн шкул çулне çитмен тата пуçламăш классен вĕрентĕвĕн кафедри пуçарнипе авăн уйăхĕнче «Ман пĕрремĕш, ман юратнă вĕрентекенĕм» ятпа эссесен конкурсĕ пуçланчĕ. Кăмăл тăвакан кашни шкул ачи, ашшĕ-амăшĕ, воспитатель, учитель хайлавсен тупăшăвне хутшăнма пултарчĕ.

Çак кунсенче вара конкурсра мала тухнисен чыславĕ иртрĕ. Жюрин кăткăс та яваплă ĕçне тăваканĕсем кашни хайлав, автор чĕри витĕр тухса, чуна тыткăнламалла шăрçаланнине палăртрĕç.

– Çамрăк çыравçăсен пур йĕркинче те мĕн чухлĕ ырă сăмах вуланать, ăшă туйăм сисĕнет! Пире, пуçламăш классен кафедринче вăй хуракансене, уйрăмах шкул ачисем хăйсен пĕрремĕш учителĕсене юратни, хисеплени питĕ хăпартлантарать, – терĕ чыслав саманчĕ пынă вăхăтра конкурса йĕркелекенсенчен пĕри Алевтина Рюриковна Федорова.

Комиссие 184 ĕçе тишкерсе хак пама чăннипех те çăмăл килмерĕ. Апла пулин те ăмăрту – ăмăртăвах!

Çамрăк авторсенчен чи пултаруллисем йышĕнче манăн ентешсем, Комсомольски районĕнчи Айдар Салахутдинов /Тукай Мишер/, Данил Титов /Комсомольски 1-мĕш вăтам шкулĕ/, Александра Чернова /Комсомольски 2-мĕш вăтам шкулĕ/, пулни мана уйрăмах савăнтарчĕ.

Эпĕ хам та çак конкурса хутшăнма кăмăл турăм. Ман пĕрремĕш вĕрентекенĕм, юратнă учителĕм паян Красноармейски районĕнчи Пикшик ялĕнче пурăнать. Кăçал 90 çул тултарчĕ Нина Андреевна Васильева. Унпа тĕл пулнă кашни самант – маншăн телей! Çулне кура мар пурнăçпа тан пырать юратнă вĕрентекенĕм. Кулленех вăл хаçат-журнал тишкерет, телевизор пăхать... Ĕçпе вăрçă ветеранĕ паян та шкул ыйтăвĕсенчен аякра тăмасть. Пăшăрхантараканни вара самаях. Хальхи çамрăксем вĕренĕве тивĕçлипе хакламаннине туять аслă ăру çынни.

Пирĕн иксĕмĕрĕн, икĕ педагогăн, сÿтсе явмалли тупăнсах пырать...

Хамăн ĕçĕмре чĕререн тухакан сăмахсене, паллах, ăна халалларăм. Юратнă вĕрентекенĕме пулах - ун пек пулас килнишĕнех – вĕрентÿ тытăмĕнче 30 çула яхăн вăй хуратăп.

Педагогсен тупăшăвĕнче иккĕмĕш вырăна тухма пултарнишĕн юратнă вĕрентекенĕм тÿпи çав тери пысăк.

Ĕçе йĕркелекенсене пысăк тав сăмахĕ каланă май «Ман пĕрремĕш, ман юратнă вĕрентекенĕм» конкурс малашне вăй илсе аталанса пырасса шанатăп. Тепĕр çулччен, юратнă конкурс!

***Елена ЯНДРОВА,***
***чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ.***

Шупашкар,
41-мĕш шкул.

# Чăваш поэзийĕн çутă çăлтăрĕ

**Пушкăрт Республикин Пелепей районĕнчи Слакпуç ялĕнче Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ çуралнăранпа 105 çул çитнĕ ятпа раштав пуçламăшĕнче поэзи уявĕ иртрĕ.**



Пелепей чăвашĕсен ертÿçи Владимир Яковлев пирĕн республика делегацине чи малтанах кунта чăваш гимназийĕпе паллаштарчĕ. Тĕрлĕ халăх ачи чăваш чĕлхипе литературине юратса вĕренет. Тăван халăх культурине, ырă йăлисене ăса хываççĕ.

Кĕçех Слакпуçне çул тытрăмăр. Кунта районти шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентекенĕсем «Ухсай вулавĕсем» регионсен хушшинчи ăслăлăхпа меслетлĕх конференцине пуçтарăннă. Конференцин пĕрремĕш пайĕнче Çĕрпÿ районĕн чăваш чĕлхипе литератури учителĕсем хутшăннипе Интернет урлă онлайн мелĕпе иртрĕ. Иккĕмĕш пайĕнче Пелепей районĕнчи учительсем Ухсай Яккăвĕн пархатарлă ĕçне хакларĕç.

Слакпуç шкулĕпе паллашма питех те кăмăллă пулчĕ. Кунта чăвашлăх малти вырăнта пулни кашни утăмрах сисĕнет. Ачасем чăваш чĕлхипе литературăна чăваш шкулĕн тĕслĕх программипе вĕренеççĕ. Тăван чĕлхене юратни кăмăла хăпартлантарать.

Ухсай Яккăвĕн музейĕ те хăйĕн пуян та хаклă экспоначĕсемпе тыткăнларĕ. Слакпуçри фольклор ушкăнĕ çăкăр-тăварпа, юрă-ташăпа кĕтсе илчĕ. Музей ертÿçи Алевтина Жилкина паха экспонатсемпе, поэт пурнăçĕнчи интереслĕ самантсемпе паллаштарчĕ. Аслă ăру поэчĕн сумлă ячĕ чăваш поэзийĕн çутă çăлтăрĕ пулнине çирĕплетрĕç. Слакпуç икĕ паллă сăвăç парнеленĕ чăваш халăхне. Эпир Константин Ивановпа Ухсай Яккăвĕн палăкĕсем патне чĕрĕ чечексем хутăмăр.

Каçкÿлĕм Слакпуçĕнчи Культура çуртĕнче иртнĕ «Эс – халăх ывăлĕ, мухтавĕ! Тавах сана, Якку пиччĕ!» фестивале халăх нумай пухăнчĕ. Шупашкартан килнĕ артистсем, вырăнти фольклор ушкăнĕн пултаруллă ăстисем юрă-ташăпа, сăвă-такмакпа, вăйă-кулăпа куракансене савăнтарчĕ.

Тĕрлĕ мероприятирен пуян кун Пелепейри Культура керменĕнче Валерий Клементьев ертсе пыракан артистсен концерчĕпе вĕçленчĕ.

Курни-илтни пуриншĕн те ĕмĕрлĕхе асра юлĕ. Слакпуç чăвашлăха упрать, аталантарать.

***Геронтий НИКИФОРОВ,***
***ЧНК вĕренÿ тата ăслăлăх комитечĕн председателĕ.***

**СĂНÜКЕРЧĔКРЕ:** Слакпуçĕнчи тĕлпулу.

# Кайăксем ăҫта хĕл каҫаҫҫĕ?

Ҫулсеренех, шăрăх вăхăтсем вĕҫленсен, кун кĕскелсен, ҫимелли сахаллансан, ҫурҫĕр тата вăтам енчи кайăксенчен чылайăшĕ кăнтăр енне ҫул тытать. Мĕншĕн ҫапла пулса иртет-ши? Кăна икĕ тĕрлĕ ăнлантарма пулать. Пĕрремĕш сăлтав – Ҫĕр ҫинчи климат улшăнни. Иккĕмĕшĕ вара – кайăксем малтанах экватор ҫывăхĕнчи шăрăх вырăнсенче /тропиксенче/ пурăнни. Вĕсем йышланса кайсан майĕпен ҫурҫĕрелле саланма тытăннă. Анчах та хĕллехи сивĕсене пула кайăксем унта ҫулталăк тăршшĕпех пурăнаймаҫҫĕ. Тепĕр тесен, ҫак шухăшсенчен пĕрне те тĕп-тĕрĕс теме ҫук. Ку ыйтăва нихăш ăсчах та татăклăн хуравлаймасть.

Ҫапах та сивĕ вăхăтсем ҫитсен кайăксем хăш ҫĕршывра хӳтлĕх тупаҫҫĕ-ши? Вăтам тăрăхра пурăнаканнисем ҫурла уйăхĕн вĕҫĕнчех е авăн пуҫламăшĕнче инҫе ҫула пуҫтарăнаҫҫĕ, икĕ уйăха яхăн вĕҫсен ҫеҫ кирлĕ вырăна ҫитеҫҫĕ. Чи малтанах куккук каять. Ун хыҫҫăн – вĕршĕнпе чĕкеҫ. Вĕсем, горихвосткăпа шăна кайăкĕ пекех, Африкăри тропик тăрăхĕнче хĕл каҫаҫҫĕ. Тăрна, кăвакал тата шыв чăххи – Египетра. Хыркук, шăпчăк, сар кайăк – Африка саваннисенче. Карăшпа вĕтел те ҫавăнтах каяҫҫĕ. Зяблик, шăнкăрч, пилеш кайăкĕ, пăрчăкан тата курак – кăнтăр-хĕвеланăҫне. Вĕсем Италире, Португалире, Испанире тата Францире хĕл каҫаҫҫĕ. Шур качаки – Кавказ тăрăхĕнче тата кăнтăр еннерех. Хурсем Каспи тинĕс хĕрне тата Крыма вĕҫеҫҫĕ. Гуменник хур Германире тата Англире хӳтлĕх тупать, вальдшнеп – Францире тата Ирландире, аист – кăнтăр Африкăра, юхан шыв чĕкеҫĕ – Хура тата Вăтаҫĕр тинĕс хĕрринче. Куратăр ĕнтĕ, кайăксем хĕл каҫма тĕрлĕ ҫĕршыва ҫитеҫҫĕ. Пĕчĕккисем сехетре 30 ҫухрăм вĕҫеҫҫĕ, пысăкраххисем вара – сехетре 100 ҫухрăм е ытларах. Анчах та кирлĕ ҫĕре вĕҫсе ҫитме пĕр уйăх кăна ҫитмест. Хăшĕ-пĕрин 10 пин ҫухрăм ытла парăнтарма тивет-ҫке. Чи инҫе вĕҫекенни – крачка /чĕкеҫ евĕрлĕ кайăк/ – 40 пин ҫухрăм кайма пултарать.



# Египет фараонĕсем те мороженăй ҫинĕ

Мороженăй мĕнле пулса кайнине тĕрлĕрен ăнлантараҫҫĕ. Хăш-пĕр ăсчах ĕнентернĕ тăрăх, ăна Александр Македонский те, Нерон та, Египет фараонĕсем те ҫинĕ. Ҫынсем авалах пылакпа сайланма юратнă. Анчах та вăл хальхи евĕрлĕ пулман.

Хальхи евĕрлĕ мороженăя пуҫласа 1660 ҫулта Парижра тума тытăннă. Ҫак тĕллевпе Прокопио Культелли сивĕтнĕ лимонадпа шерпет хутăштармалли ятарлă бидон шухăшласа тупнă.

Хăйма мороженăйĕн тăван ҫĕршывĕ вара – Великобритани.



# Дельфинсем – пирĕн ҫывăх тăвансем



Дельфинсене ҫынсем мĕн авалтанах хисепленĕ, юратнă, вĕсемпе савăнса киленнĕ. Турă вырăнне хунă. Ҫак чĕрчунăн пуҫ мимийĕ сасă сигналĕсене этем пуҫ мимийĕ видеоинформацие йышăннă пек илет.

Дельфин – тинĕс сăнарĕ. Халапсене ĕненес пулсан, тинĕс туррисем яланах дельфинсен ушкăнĕпе пĕрле килнĕ. Тинĕссемпе океансен хуҫине Посейдона та яланах ҫак чĕрчунсемпе сăнланă. Унсăр пуҫне дельфин – карапсен тата моряксен хӳтĕлевҫи. Афродита тинĕс кăпăкĕнчен ҫуралнине ҫинчен калакан халап хыҫҫăн вара вăл илемлĕхпе юрату палли те пулса тăнă.

Тинĕс тăвăлĕ пуҫланас умĕн дельфинсем шыв ҫинче курăнма пăрахаҫҫĕ имĕш, питĕ тарăн ишсе анаҫҫĕ. Ҫапла майпа вĕсем моряксене асăрхаттараҫҫĕ.

Хальхи халапсене ĕненес пулсан вара, путса вилекен ҫыннăн чунĕ дельфин кĕлеткине кĕрсе вырнаҫать, ҫĕр ҫине лексен хитре арҫынна ҫаврăнать.

Дельфин – ушкăнпа пурăнакан чĕрчун. Ушкăнра чухне вĕсем пĕр-пĕринпе ҫынсенчен хăвăртрах пĕр чĕлхе тупаҫҫĕ. Дельфинсен хутшăнăвĕ сасă импульсĕпе тата ультра сасăпа палăрать. Вĕсем тĕрлĕрен сасă кăлараҫҫĕ: шăхăраҫҫĕ, чĕвĕлтетеҫҫĕ, нăрлаҫҫĕ, нăйкăшаҫҫĕ, ҫухăраҫҫĕ, нăчлаттараҫҫĕ, шаклатаҫҫĕ, шатăртатаҫҫĕ, ҫатлаттараҫҫĕ, улаҫҫĕ, кăшкăраҫҫĕ, чĕриклетеҫҫĕ… Шăхăрни уйрăмах лайăх илтĕнет, вăл темиҫе тĕрлĕ пулать. Кашниех уйрăм пĕлтерĕшлĕ /сисчĕвленӳ, ырату, чĕнӳ, пĕр-пĕрне сывлăх сунни, асăрхаттарни/. Тата Америка ăсчахĕсем ҫапларах пĕтĕмлетӳ тунă: ушкăнри кашни дельфинăн хăйĕн ячĕ пур, вĕсем пĕр-пĕрне ятран чĕнеҫҫĕ.

Паянхи куна ăсчахсем ҫак чĕрчунсен 180 яхăн хутшăну паллине асăрханă. Тĕпчевҫĕсем вĕсемпе «калаҫмалли» ятарлă словарь хатĕрлесшĕн. Шел пулин те, дельфин чĕлхине туллин ăнланма хальлĕхе май килмен-ха.

Ăсчахсем пурпĕрех малалла ĕҫлеҫҫĕ. Дельфинсен калаҫăвĕ ултă шайран тăрать имĕш: сасă, сыпăк, сăмах, ансат пуплев, кăткăс пуплев тата абзац. Вĕсем хăлхапа мар, янахăн аялти пайĕнчи антеннăпа илтеҫҫĕ. Чи тĕлĕнмелли вара: дельфинсем ӳкерчĕкпе калаҫаҫҫĕ.

Мельбурн университетĕнче ҫыннăн тата дельфинăн ДНК тĕпчевне ирттернĕ. Танлаштарнă хыҫҫăн ҫакă палăрнă: дельфинсем – хальхи этемĕн ҫывăх тăванĕсем, вăтамран илсен 250 пин ҫул каялла ҫеҫ шывра пурăнма тытăннă. Вĕсен ҫӳллĕ шайра аталаннă ăс-тăнĕ тĕпчевҫĕсене яланах кăсăклантарнă. Апла пулсан «чул ĕмĕр» тапхăрĕнче дельфинăн икĕ ура пулнă, ҫунаттисем вырăнне – алăсем. Пуҫ мимийĕ этемĕннинчен пысăкрах, чĕлхи те питĕ кăткăс.

Дельфин организмĕн хăйне евĕрлĕхĕ – суран хăвăрт ӳт илни. Хăрушла амансан та ăна юланнине кураймăн.

# Шухăшлакан ӳсен-тăран



Вăтам ĕмĕрсенчи паллă тухтăр Парацельс кашни ӳсен-тăранăн чунĕ пуррине ĕненнĕ. Авалхи ăслă ватăсем те унпа килĕшнĕ. Паян вара эпир ҫакна йышăнасшăн мар. Пирĕн шухăшпа, ӳсен-тăран туйма та, асапланма та пултараймасть. Чăннипех те ҫапла-ши ку?

Хальхи тĕпчевҫĕсем ҫирĕплетнĕ тăрăх, ӳсен-тăран та ыратнине туять, хăйне суранлатсан «кăшкăрать», ҫакна юнашар вырнаҫнисем те «илтеҫҫĕ», эпир кăна ăнланмастпăр. Ҫавăн пекех вĕсем выҫлăхпа тата шыв ĕҫес килнипе асапланаҫҫĕ.

20-мĕш ĕмĕрĕн 60-мĕш ҫулĕсен варринче Клив Бакстер, ЦРУ специалисчĕ, интереслĕ тĕрĕслев ирттернĕ, ҫакна «Ӳсен-тăрансен вăрттăн пурнăҫĕ» кĕнекере ҫырса панă. Унăн пуҫне тĕлĕнмелле шухăш пырса кĕнĕ: ӳсен-тăран тулаш вĕчĕрхентерĕвĕ мĕнле йышăннине ултав детекторĕпе тĕрĕслемелле. Прибора вăл филодендронпа ҫыхăнтарнă, ун хыҫҫăн ӳсен-тăран патне вĕри кофе илсе пынă та пĕр ҫулҫине унпа йĕпетсе илнĕ. Нимĕнле хурав та пулман. Вара Бакстер пĕр ҫулҫине ҫунтарса пăхас тенĕ. Ҫапла шухăшласа илнĕ кăна – прибор ҫине паллă тухнă. Вăл, телепат пекех, ҫын мĕн шухăшланине илтсе хăраса ӳкнĕ иккен! Юнашар чĕрĕ чун асапланнине те питĕ ҫивĕч туять.

Часах Бакстер ҫакна ăнланнă: шăварсан, ҫулҫисене ачашласан, ҫепĕҫҫĕн калаҫсан ӳсен-тăран питĕ савăнать. Хуҫи лайăх пăхсан, кайран вăл темĕнле аякра пулсан та, вĕсен хушшинчи ҫыхăну татăлмасть.

Клив Бакстер кĕнекипе паллашнă хыҫҫăн нумайăшĕ килти чечексемпе ăшшăн калаҫма, вĕсене юратса пăхма тытăннă. Ҫакă ахаль иртмен: чечексем лайăхрах ҫуралнă, сахалрах чирленĕ тата хитререх курăннă.

Эдинбург университечĕн академикĕ Тони Труэвас вара ӳсен-тăрансем те шухăшлама пултарнине пĕтĕмлетнĕ. Вĕсем унччен мĕн пулнине асра тытаҫҫĕ тата ҫывхарса килекен инкеке те асăрхама пултараҫҫĕ иккен.

Ӳсен-тăранăн астăвăм пур-тăк, эппин, пуҫ мими пекрех япала та пулмалла. Хăш-пĕр ăсчах шухăшĕпе вăл шăпах – тымар. Ӳсен-тăрансем пĕр-пĕрне хăрушлăх пирки асăрхаттарма та пултараҫҫĕ.

«Симĕс тусăмăрсен» вăрттăнлăхĕсене хальлĕхе пĕтĕмпех уҫса ҫитереймен-ха. Ăсчахсем ырми-канми тăрăшсан тĕлĕнмеллисем малашне татах та пулĕҫ.

**● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП**

## Грекла хатĕрленĕ пулă

**Çимĕç валли 700 грамм шăмминчен уйăрнă пулă, 3 помидор, 300 грамм сыр, ыхран 2 шăлĕ, 250 грамм майонез, кăштах лимон сĕткенĕ тата ешĕл çимĕçсем кирлĕ.**

Вăтам татăксене каснă пулла тăварпа тата çур лимон сĕткенĕпе хутăштармалла. Теркăпа хырнă сыра /150 грамм/, вĕтетнĕ ыхрана, вакланă помидора, ешĕл çимĕçе майонезпа пăтратмалла. Пулă татăкĕсене хатĕр хутăшпа йĕпетмелле те çу сĕрнĕ противене хумалла. Çиеле юлнă сыра сапмалла. Ывăса 180 градус таран хĕртнĕ духовкăна лартса çур сехет тытмалла.

## «Астра» салат

**Салат хатĕрлеме шăмминчен уйăрнă чăх какайĕ /кăкăр тĕлĕнчи/, 2 помидор, 2 ыхра шăлĕ, 4 çăмарта, 2 пылак пăрăç /хĕрли тата сарри/, 4-5 кашăк майонез, кăштах тăварпа пăрăç кирлĕ.**



Пĕçерсе сивĕтнĕ какайпа помидора тăваткалласа вaклăр. Ыхрана вĕтетĕр. Пăрăçа çуса вăрринчен тасатăр. Саррине тăваткалласа вĕтетĕр. Хĕрлине çаплипех хăварăр.

Çимĕçсене ăшăх турилккене сийпе çак йĕркепе хурăр: какай, помидор, ыхрапа пăрăç, теркăпа хырнă çăмарта. Пур сие те кăштах тăвар-пăрăç сапăр тата майонез сĕрĕр. Салата улăм пĕрчи евĕр вакланă хĕрлĕ пăрăçпа илемлетĕр – вĕсене астра чечекĕ евĕр хурса тухăр. Çеçке варрине сарă пăрăç касăкне вырнаçтарăр.

## Наггетс

**Çимĕç валли шăмминчен уйăрнă чăх какайĕ, 1 çăмарта, 100 грамм вĕтетнĕ типĕтнĕ çăкăр /панировочные сухари/, 30 миллилитр сĕт, кăштах тăвар, техĕмлĕх, ӳсен-тăран çăвĕ кирлĕ.**

Çăмартапа сĕте хутăштарса лăкамалла. Какая çуса типĕтмелле те пысăках мар татăксене вакламалла. Тăвар, специ сапмалла. Пĕрерĕн-пĕрерĕн илсе малтан хатĕр хутăшпа йĕпетмелле, хыççăн типĕтнĕ çăкăрпа йăваламалла. Наггетссене çу янă хĕртнĕ çатмара пысăках мар çулăм çинче ылтăн тĕс çапиччен икĕ енчен те ăшаламалла. Хатĕр çимĕçе хут алшăлли сарнă савăта хумалла. Ăна кетчуппа е соуспа тутансан аван. Апачĕ тутлă пултăр!

## Сĕнӳсем

➢Тумтир йодпа варалансан çав тĕле крахмал сĕрĕр те сивĕ шывпа чӳхĕр.

➢Кĕнеке ăнсăртран шывпа йĕпенсен листасем çумне хут хумалла та кĕнекене веер евĕр уçса хумалла. Унта сывлăш лайăх кĕтĕр. Кĕнекене хĕвел тата ăшă паракан батарейăсем çинче типĕтме юрамасть.

➢Темиçе çынна пĕрле сăн ӳкернĕ чухне вĕсене куçĕсене хупма, виççĕ таран шутланă тĕле уçма хушăр. Ун пек сăнӳкерчĕкре куçа хупнă самант пулмĕ.

➢Юлташăра çуралнă кун ячĕпе мĕн парнелемелли çинчен шухăшлатăр-и? Ăна хăвăр парне илсе хунине пĕлтерĕр те çакă мĕн иккенне тавçăрма ыйтăр. Вăл хăйне килĕшнĕ япаласене каласа тухĕ. Кун хыççăн çывăх çынна мĕнле парнепе савăнтарас шухăш уçăмланĕ.

➢Телефона «зарядкăра» чухне «Самолетра» режим лартăр. Ун пек вăл ытти чухнехинчен хăвăртрах тулса çитĕ.

**● ХАМĂР ХУШĂРА**

# Парне тата кăмăл-туйăм



### Тест

Кашниех парне илме килĕштерет. Эпир яланах пĕрпĕр уявра çывăх тус-юлташа е тăван-пĕтене савăнтарма тăрăшатпăр. Кунта вара чи кирли – парне çывăх çын кăмăлне тивĕçтерни. Çакă хамăртан та чылай килет. Вăл кăна та мар, парне çын мĕнле пулнине уçса парать иккен. Тест хуравĕсем сирĕн кăмăл-туйăмăра уçăмлатма пулăшĕç.

**1. Парнене çынна теме систерсе е вăлтса тыттаратăр-и?**
Çапла – 5 балл.
Хăш чух – 4 балл.
Çук – 3 балл.

**2. Парнене тимлĕн суйлатăр-и?**
Çапла – 5 балл.
Хăш чух – 4 балл.
Çук – 3 балл.

**3. Парнене маларах калаçса татăлса туянатăр-и?**
Çапла – 5 балл.
Хăш чух – 4 балл.
Çук – 3 балл.

**4. Парнелекен япала çынна кирлĕ тесе шухăшлатăр-и?**
Çапла – 3 балл.
Хăш чух – 4 балл.
Çук – 5 балл.

**5. Темиçе вак-тĕвек япала париччен пĕр-пĕр сумлă парне лайăхрах тесе шутлатăр-и?**
Çапла – 5 балл.
Хăш чух – 4 балл.
Çук – 3 балл.

**6. Парне уйрăмах сирĕн çинчен аса илтересси пирки шухăшламастăр-и?**
Çапла – 3 балл.
Хăш чух – 4 балл.
Çук – 5 балл.

**7. Парнен хакĕпе пахалăхĕ пĕлтерĕшлĕ-ши?**
Çапла – 3 балл.
Хăш чух – 4 балл.
Çук – 5 балл.

**8. Парне сире кам умĕнче те пулин парăмлă пулнă пек туйма хистет-и?**
Çапла – 3 балл.
Хăш чух – 4 балл.
Çук – 5 балл.

**9. Парне туяннă чухне вăл хăвна та кирлĕ пулать тесе шухăшлатăн-и?**
Çапла – 3 балл.
Хăш чух – 4 балл.
Çук – 5 балл.

**10. Пĕчĕк парне туслăха çирĕплетет, пысăкки вара парăмлă пулнă пек туйма хистет.**
Çапла – 3 балл.
Хăш чух – 4 балл.
Çук – 5 балл.

**Пĕтĕмлетӳ**

*30-36 балл.* Эсир йăла-йĕркене килĕштеретĕр, сирĕн пурнăçра пурте йĕркеллĕ пулмалла. Сире тăванăрсем, паллакансем тата тус-тантăшăр уйрăмах шанаççĕ.

*37-43 балл.* Эсир пуринчен те лайăхрах пурăнма е çавăн пек пулма тăрăшатăр. Хăвăрăн айванлăхăра кăтартас теместĕр, çавăнпа ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмастăр пек туйăнатăр.

*44 балл.* Сирĕн тĕллев – çывăх çынсен, юлташсен шухăш-кăмăлне пĕлесси. Чи кирли вара вĕсене ăнланасси тата пулăшасси.

**● ÇАМРĂК ПАХЧАÇĂ**

# «Пӳлĕм чечекĕ, ан пĕтсем»



*Сывлăх сунатăп, чиперуксен страници! Пирĕн килте чечек нумай. Анчах вĕсем майĕпен шанаççĕ, хăраççĕ. Сивĕ çанталăкра сахалрах шăварма тăрăшатăп, пурпĕрех пĕтеççĕ. Сăлтавĕ мĕнре-ши?*

***Алена ИВАНОВА.***
Красноармейски районĕ.



Хисеплĕ Алена! Хĕл кунĕсенче чечексене уйрăмах тимлемелле. Çутă çитменрен вĕсен ӳсес вăйне «перекетлемелле».

Ăшă паракан батарейăсен типĕ сывлăшĕ чечексемшĕн лайăхах мар. Чи йывăр тапхăр – чӳк уйăхĕнчен пуçласа нарăс уйăхĕн çурриччен. Ӳсен-тăрана ытлашши апатлантарма та, вăйлă шăварма та кирлĕ мар. Типĕтсе яма та юрамасть. Чылай чечеке /сăмахран, азалия, камелия, пальма/ хĕлле сулхăнрах вырăнта усраççĕ. Вĕсене икĕ эрнере пĕрре хуçалăх супăнĕн шывĕпе пĕрĕхмелле. Хăш-пĕр чечек çын пекех сивве чăтаймасть, çавăнпа пӳлĕмри шывпа кăна сирпĕтмелле.

Пӳлĕмри чечексем икĕ ушкăна пайланаççĕ: оранжерейăра ӳсекен, çеçке çураканнисем тата илемлĕ çулçăллисем. Çеçкене лараканнисем ыттисенчен ачашрах. Сăмахран, азалия иккĕмĕш çулне кăна аран-аран çурăлать. Çавăнпа ăна çулла хĕвел лайăх ӳкекен вырăнта тытмалла, хĕлле шывпа чечек тĕвви уçăличченех пĕрĕхмелле. Хĕл кунĕсенче чечеке куçарма кирлĕ мар. Çак ĕçе нарăс уйăхĕн вĕçĕнче е пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче çеç тума юрать.

Чечек тымарĕ çĕрнипе хăрать пулсан ăна куçарса ан лартăр, юрăхсăрланнă тымарĕсене татса пăрахăр. Ун хыççăн чечеке таса хăйăр е мăк ăшне лартăр.

Çеçкене ытларах чухне çутă çĕрте тытаççĕ: чи меллĕ вырăн – чӳрече янахĕ.

Страницăна Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.




*Çакăнти сăмахсенчен пĕрер саспалли улăштарсан варринче кирлĕ пĕлтерĕш вуланать. Пĕр тĕслĕхне илсех кăтартатпăр.*

| | | |
|---|---|---|
| ПĂРĂХ | Ш | ШĂРĂХ |
| КАÇ | | |
| КАРАТ | | |
| ПĂТ | | |
| ПĂШИ | | |
| ПУРАК | | |
| ТĂВАР | | |
| ТУТĂХ | | |



# Сăмахкаçмăшсем



**Сылтăмалла:** 1. Одиссей ывăлĕ. 4. Украинăри хула. 7. Çĕпĕрти юханшыв. 9. К. Маркс «пуянлăхĕ». 10. Çар званийĕ. 11. Чапа тухнă йĕрлевçĕ – Нат … 14. Вăтам Азири кăмака. 17. Пустав. 19. Инçет Хĕвелтухăçĕнчи хула. 20. Футболист, Тбилисири «Динамо» командăра вылянă. 21. Паллă киноактер, Украинăра çуралнă. 22. Вăл парашют шухăшласа кăларнă. 23. Ацетон юлташĕ. 25. Тинĕс карапĕсен пуххи. 28. Итали ӳнерçи. 31. Мордвари хула. 32. Пулеметла урапа. 33. Чăваш çыравçи. 34. Грецири хула. 35. Тĕрĕксен пĕрремĕш президенчĕ.

**Аялалла:** 1. Ăсчах хайлавĕ. 2. Авалхи грексен драматургĕ. 3. Вăрнар районĕнчи ял. 4. Чăваш журналĕ. 5. Шыв пусăмĕн пĕр пек пайĕ. 6. Офицер «сумкки». 8. Ферзь фигурăна хăратса илни. 12. Авалхи алфавит. 13. Раççейри хĕрарăмсен журналĕ. 15. «Арсенал» командăра вылянă вырăс футболисчĕ. 16. «Калинов мост» юрă ушкăнĕн ертӳçи. 17. Чулхула çывăхĕнчи поселок. 18. Авалхи грексен ăсчахĕ. 23. Чăваш композиторĕ. 24. Ротару юрлакан юрă. 26. Мăсăльмансен чиркĕвĕ. 27. Тухăçри урхамах. 28. Унта Эльбруспа Казбек вырнаçнă. 29. Çуллахи ĕççи. 30. Канадăн тĕп хули.

*Транспортсене тĕрĕс вырнаçтарса тухсассăн Никулин, Моргунов тата Вицин вылянă кинокамитĕн ячĕ тухĕ.*




*Çак йĕркесенчи икшер сăмахран пĕр çĕнĕ сăмах шыраса тупмалла. Хуравсене тĕрĕс пурнăçласассăн, палăртнă клеткăсенче пуçватмăш тупсăмĕ вуланĕ.*

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| КАС + САК | | | | | | |
| ПАТ + КАР | | | | | | |
| ЛАК + ЧĂМ | | | | | | |
| АКА + САП | | | | | | |
| АНА + ТĂМ | | | | | | |
| АНТ + ТАЛ | | | | | | |



**Сылтăмалла:** 3. Сехет пайĕ. 9. Уншăн Троя вăрçи пуçланнă. 10. Авалхи грексен «пасарĕ». 11. Пушхир кушакĕ.12. Ун ятлă вырăн Грузипе Испанире пур. 13. Тахçан вăл юлашки саспалли пулнă. 14. Юрăç, Агутин мăшăрĕ. 16. Ăсчахăн ĕçĕ. 19. Урай сăрламалли япала. 22. «Червона …». 23. А. Райкинăн ăслă студенчĕ. 24. Пĕчĕк ачасен тăмĕ. 25. Унта тумтир упраççĕ. 27. Бразили футболисчĕ. 30. Хурт-кăпшанкă. 32. Вĕçевçĕ. 33. Лав пайĕ. 34. Хĕнемелли патак /вырăсла/. 36. «Бухгалтер», «Электричка» юрăсене шăрантаракан. 37. Чăвашсен Турри. 38. Чăваш сăвăçи. 39. «Тинĕсри вĕçенкайăк». 40. Синоним мар.

**Аялалла:** 1. Ача-пăча тухтăрĕ. 2. Ăна-кăна таçтан та пĕлекен. 3. Вăрçă вăхăтĕнчи француз партизансен ячĕ. 4. Серб кӳрши. 5. Физика терминĕ. 6. Хими элеменчĕ. 7. Негатив мар. 8. Музыка инструменчĕ. 14. Чăваш сăвăçи. 15. Л. Толстой романĕнчи сăнар. 17. Карап пайĕ. 18. Грексен алфавитĕнчи саспалли. 20. Яппун поэзинчи хокку юлташĕ. 21. Машинасене страхлакан организаци. 25. Исаевăн хушма ячĕ. 26. АПШри штат. 28. Пĕр-пĕр тавар пĕлтерĕшĕ. 29. Унта Сахаров ссылкăра пулнă. 31. Мăскал. 32. Казаксен пуçлăхĕ. 35. Аппан урăхла ячĕ. 36. Вăл пайланмасть тесе шутланă.

***Николай КРАСНОВ** (Йĕпреç районĕ) **хатĕрленĕ.***